чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

182/26588/ № Кĕçнерни кун, 2014, авăн (сентябрь), 18 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

Мускавра суйлава пĕтĕмлетрĕç

Авăн уйăхĕн 14–15-мĕшĕсенче Мускавра "Раççей регионĕсем" медиафорум ĕçлерĕ. Унта Мускаври тата регионсенчи информацин йышлă хатĕрĕсен репортерĕсем, çав шутра "Хыпар" журналисчĕ те хутшăнчĕç.

Халăхсен хушшинчи суту-илӳ центрĕнче пуçтарăннă политологсем, социологсем, РФ Патшалăх Думинче фракци йĕркеленĕ тата парламент партийĕ шутланман политика партийĕсен ертӳçисем Пĕрлехи суйлав кунне пĕтĕмлетрĕç.

Авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче çĕр-шывăн 84 субъектĕнче тĕрлĕ шайри суйлав иртнĕ. Вĕсене 75 млн суйлавçă, 56 парти, обществăн 11 пĕрлешĕвĕ хутшăннă. Комиссисем суйлав кампанине явăçăнма ирĕк парса влаç органĕн вăл е ку мандачĕшĕн кĕрешме 100 пин ытла кандидата регистрациленĕ.

Суйлав саккунпа килĕшӳллĕн иртнĕ. Федерацин 30 регионĕн кĕпĕрнаттăрне, саккунсем кăларакан 14 пухăвĕн депутачĕсене суйланă. Федерацин "Регнум" информаци агентстви йĕркеленĕ медиафорумра Раççей Правительствин тата "Пĕрлĕхлĕ Раççей" парти председателĕ Дмитрий Медведев суйлава пĕтĕмлетрĕ. Тĕплĕнрех – шăмат кунхи номерте.

Ю.МИХАЙЛОВ.

Çĕнĕ Шупашкарта – футбол уйĕ

Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев химиксен хулинче пулнă. Савăнăçлă лару-тăрура нумай ачаллă Кирилловсемпе Аверкиевсен çемйисене Строительсен урамĕнчи çуртра вырнаçнă хваттерсен уççисене панă.

Республика Пуçлăхĕ Çĕнĕ Шупашкарсене çывхарса килекен Хула кунĕпе саламланă. Михаил Игнатьев Чăваш Енри чи çамрăк хула тикĕс аталаннине, пурнăç шайĕ лайăхланса пынине, ĕçсĕрлĕх ыйтăвне татса панине, предпринимательлĕхе аталантарма условисем тунине палăртнă. Çӳлерех асăннă Кирилловсен 5 ачаллă çемйи пĕр пӳлĕмлĕ хваттере тивĕçнĕ. 5 çул каялла Удмуртирен куçса килнĕ Аверкиевсен çемйи /вĕсен 7 ача/, халĕчченех хваттер тара илсе пурăнаканскер, виçĕ пӳлĕмлĕ 2 хваттерлĕ пулнă. "Пирĕн пек çемьесене пулăшнăшăн питĕ пысăк тав, нумай ачаллисене тĕрев кирлех!"– тенĕ Надежда Аверкиева.

Михаил Игнатьев химиксен хулинче футбол стадионне уçма хутшăннă. Асăннă спорт объектĕнче шкулсем физкультура урокĕсене ирттерĕç, çавăн пекех пысăк ăмăртусем те пулĕç. Чăваш Ен Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх – юлашки çулсенче Çĕнĕ Шупашкарта спортăн чылай объекчĕ хута кайнă, хăшне-пĕрне юсаса çĕнетнĕ. Кунта çăмăл атлетика манежĕ, 50 метрлă бассейн пур. Нумаях пулмасть "Сокол" пăр керменне тĕпрен юсаса çĕнетнĕ. "Çĕнĕ Шупашкарта ватти-вĕтти те физкультурăпа тата спортпа туслаштăр, сывă пурнăç йĕркине пăхăнтăр тесе мĕн пур услови тунă. Хăвăрах куратăр, ачасемпе çамрăксен спорт юхăмне аталантарма та меллĕ кунта"– тенĕ Михаил Игнатьев.

А.ПЕТРОВА.

БРИФИНГ

Тăванла халăхпа сапăр пулар

УКРАИНĂРАН ТАРСА КИЛНИСЕМ ПИРĔН ПУЛĂШĂВА, ЫР КĂМĂЛЛĂХПА ХĂТЛĂХА ТУЙСАХ ТĂЧЧĂР

Чăваш тата Украина каччисен Андриян Николаевпа Павел Поповичăн уçлăхри пĕрлехи вĕçевĕ хыççăн икĕ халăхăн туслăхĕ татах çирĕпленнĕ. Ĕç коллективĕсем, уйрăм çынсем те пĕр-пĕрин патне хăнана çӳреме тытăннă.

Кăçал Украинăран çынсем тарса килме тытăнсан чăваш халăхĕ вĕсене тăвансем пекех ăш пиллĕн йышăнчĕ, пурне те вăхăтлăха пурăнмалли пунктсене вырнаçтарчĕ, йăла тата социаллă условисемпе тивĕçтерчĕ. «Контур» АУО, «Чăваш Ен-курорт» санатори, «Заимка» турбаза, ытти те, çавăн пекех уйрăм çемьесем те хапăл йышăнчĕç.

Чăваш Енре хальхи вăхăтра Украинăран тарса килнĕ 1289 çын пурăнать. Çурри ытларахăшĕ производствăра вăй хума пултарать. Пĕр пайĕ ĕçе вырнаçнă ĕнтĕ. Шел те, чылайăшĕн шалăвĕ пысăк мар, çав вăхăтрах урăх çĕр-шыв çынни пулнă май тупăшран 30% налук тытаççĕ /гражданлăх йышăнсан налук виçи пирĕн пекех 13% пулать/. Хĕл çывхарнă май ăшă тумтир, атă-пушмак туянмалла. Вĕсене валли кĕмĕл пурин те çитмесен те пултарать.

Ĕнер ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствинче журналистсемпе брифинг иртрĕ. Унта ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕн пĕрремĕш çумĕ Светлана Петрова, сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн çумĕ Галина Германова тата РФ Миграци службин Чăваш Енри управленийĕн пай пуçлăхĕ Вячеслав Степанов хутшăнчĕç. Галина Михайловна спонсорсене МИХ кăларăмĕсем урлă нуша тӳснисене ăшă тумтирпе /уйрăмах атă-пушмакпа/ пулăшмашкăн чĕнсе каларĕ, йышăну çурчĕн адресне пĕлтерчĕ: Шупашкар, Стрелоксен 324-мĕш дивизийĕн урамĕ, 21 «а».

Ачасемпе çамрăксен шăпипе Светлана Владимировна паллаштарчĕ: «Шкул çулне çитменнисем – 155. 67-шне садике вырнаçтарнă, ыттисем амăшĕсемпе пĕрле. Шкулсенче 199 ача вĕренет, 25-шĕ пĕрремĕш класа кайнă. Шкул программи хăйсеннипе пĕрешкел мар та, учительсем вырăс чĕлхипе хушма занятисем ирттереççĕ, уйрăмшарăн та ĕçлеççĕ. Чылай ача пĕлĕве çирĕплетме пĕлтĕр вĕреннĕ класах çӳрет. Техникумсемпе колледжсенче – 18, вузсенче 9 çамрăк пĕлӳ пухать».

Шăпăрлансем садикре япăх çывăраççĕ иккен, вырăн çинчен ӳкекен те пур. Бомба-снаряд кĕрлевĕнчен хăрани халĕ те иртмен. Çĕнĕ вырăна хуллен хăнăхаççĕ. Ачасем çеç-и, çитĕннисем те. Хăшĕ-пĕри хăйне халĕ те чирлĕ çын евĕр йывăр туять. Кăмăлĕ пусăрăнчăк. Ĕмĕрĕпе пухнă мул самантрах кĕл купине çаврăннăшăн епле кулянмăн-ха? Тепри хваттере халĕччен çаратса пĕтерчĕç пулĕ тесе пăшăрханать. Кунта вĕсем хăйсене вăхăтлăха хăнана килнĕн туяççĕ. Самана йĕркеленсе çитсенех каялла каясшăн.

Украинăпа çывăх Ростов, Воронеж облаçĕсенчен мирлешӳ тапхăрĕнче çĕр-çĕр çемье килĕсене таврăннине Вячеслав Витальевич та çирĕплетрĕ.

– Инкек тӳсекенсене йывăр хуйхăпа касăлма парас марччĕ, – терĕ Светлана Петрова. – Куратор пулса шефа илесчĕ. Кану кунĕсене пĕрле ирттерме майсем шырасчĕ, ăшă сăмахпа та пулсан чунĕсене йăпатасчĕ.

Хĕн курман çын ыттисен хуйхи-суйхине ăнланмасть теççĕ. Никамăн та инкек тӳсес марччĕ, çав вăхăтрах тарса килнисемпе йывăр вăхăтра сапăр пулмалла. Тăванла халăх пирĕн пулăшăва, ыр кăмăллăхпа хăтлăха туйсах тăтăр.

Федераци бюджетĕнчен паракан укçана куçса килнисене алран памаççĕ, ăна вăхăтлăха хӳтлĕх панă учрежденисене куçараççĕ. Пурăнтарнăшăн, апат çитернĕшĕн, хăтлăх кӳнĕшĕн татăлма. Брифингра сăмах çакăн çинчен те пулчĕ.

Медицина ĕçченĕсем хăнасене çитнĕ кунах тĕрлĕ чир-чĕр пуррипе çуккине тĕрĕслĕç. СПИД, ВИЧ, сикекен ытти чир... Галина Михайловна ку енĕпе лару-тăру йĕркеллех пулнине пĕлтерчĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Алина ИЗМАН сăн ӳкерчĕкĕ

● ***Донецк облаçĕнчи Краматорскран килнĕ Бондаренкăсем Шупашкар районĕнчи Шăмăш ялĕнче хӳтлĕх тупнă.***

✔ ФЕДЕРАЦИ БЮДЖЕТĔНЧЕН ПАРАКАН УКÇАНА КУÇСА КИЛНИСЕНЕ АЛРАН ПАМАÇÇĔ, ĂНА ВĂХĂТЛĂХА ХӲТЛĔХ ПАНĂ УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ КУÇАРАÇÇĔ. ПУРĂНТАРНĂШĂН, АПАТ ÇИТЕРНĔШĔН, ХĂТЛĂХ КӲНĔШĔН ТАТĂЛМА

КĂСĂКЛАНУ

Ял ĕçченĕ сывлăш çавăртăр

Эпĕ хулара пурăнатăп, ялта çуралса ӳснĕ. Ял хуçалăх производствипе çыхăннă кашни ыйту маншăн çывăх. Ара, ял ĕçченĕ хула çыннин сĕтелĕ тулăх пултăр тесе ырми-канми тăрăшать-çке. Ку ыйту Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн иртнĕ сессийĕнче çивĕч çĕкленнине пĕлетĕп. Сăмах мĕн çинчен пынине «Хыпара» вулакансене тĕплĕнрех пĕлтереймĕр-ши? Ку ыттисемшĕн те кăсăклă пулĕ.

Алина ИСАКОВА.
Шупашкар хули.

Алина Алексеевна ыйтăвне хуравласа вулакана сессире тухса каласнă Олег Дельман депутат сăмахĕпе паллашма сĕнетпĕр.

– «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн аталанăвĕ çинчен» саккун проектне хальхи вăхăтра, чикĕ тулашĕнчен турттарса килекен продукцие хамăрăннипе улăштарас тĕллевпе тĕрлĕ мероприяти иртнĕ тапхăрта тишкерни тата ăна сесси кун йĕркине кĕртни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ял хуçалăхĕн аталанăвĕн саккун проекчĕ, тĕпрен илсен, Чăваш Енри ял хуçалăхĕ лайăх вăй илнипе, аталаннипе çыхăннă. Мирлĕ вăхăтра пурăнатпăр пулин те çур тĕнче яхăн Раççее хирĕç тăнă самантра ял хуçалăх аталанăвĕн ыйтăвĕсене пирĕн хăвăрт, малашлăха пăхса тата ял хуçалăх продукцине туса илекене финанс тĕлĕшĕнчен пулăшса тата саккунлăха тĕпе хурса татса пама тăрăшмалла. Саккун проектĕнче çак тĕллевпе палăртнă суммăна, ку енчен эпĕ Олег Мешков депутатпа килĕшетĕп: пур çĕрте те пулăшма пултаракан меслет вырăнне йышăнма кирлĕ мар. Ăна, инфляци кура, яланах пысăклатса, пуянлатса тăмалла. Раççейре йышăнакан саккунлăхпа тата программăсемпе килĕшӳллĕн. Хальхи вăхăтра кун пек темиçе программа йышăнма палăртнă. Вĕсенчен пĕри 2015-2020 çулсенче çĕр-шыва пахча çимĕç, аш-какай тата ыттине кӳрсе килессине чакарассипе çыхăннă. Отрасле пулăшма лартнă тĕллевсен шутне селекци тата генетика центрĕсем йĕркелессипе, сĕт-çу тата аш-пăш туса илессипе, ял хуçалăх техникин паркне çĕнетессипе, пахча çимĕç, иçĕм çырли туса илессине аталантарассипе çыхăннă.

Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствинче те, ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсем те Правительство комиссийĕнче 2020 çулччěнхи тапхăрта сĕт-çу отрасльне аталантармалли программăн проектне кĕç-вĕç пăхса тухассине пĕлеççĕ. Çавăнпа пĕрлех РФ ял хуçалăх министрĕ сĕннипе выльăх-чĕрлĕх, уйрăмах – сĕт-çу, производствине аталантарма федераци бюджетĕнчен тĕллевлĕ укçа-тенкĕ уйăрма палăртнă. Чăваш Енре те çак ыйтăва тишкерме сĕнетĕп.

Нумаях пулмасть пирĕн республикăра федерацин ял хуçалăх министрĕ пулчĕ. Аграрисен тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен канашлăвĕнче республикăн 2013-2014 çулсенчи ял хуçалăх аталанăвне тишкерсе критиклерĕ. Хăш-пĕр факта кăштах тĕллевлĕ улăштарнă пулин те, республикăри Ял хуçалăх министерстви темшĕн-çке критикăна туллин йышăнчĕ. РФ Ял хуçалăх министерствин пĕр сĕнĕвĕ мана та, манăн ĕçтешсене те килĕшрĕ: республикăра выльăх-чĕрлĕх, сĕт-çу, ашкакай производствине аталантарма пĕтĕм май çителĕклĕ. Выльăх-чĕрлĕх производствине суйласа илмелле те ăна, Чăваш Республикинчи тата Раççей Федерацийĕнчи аталану программисемпе килĕшӳллĕн, вăя кĕртмелле çеç. Чăваш Ен Ял хуçалăх министерствине çак ене аталантарма инвестпрограмма хатĕрлеме сĕнĕттĕм. Республикăн тĕрлĕ районĕнче 500, 1000, 1200, 2200 ĕне выльăх тытмалли сĕт-çу комплексĕ хута яма ирĕк паракан документаци пулсан, техника паркне аталантарсан кăна пурнăçа кĕртме пулать. Вырăнти е аякри инвесторăн çапла тума кăмăл çуралсан ăна вырăнлă услови – сĕт-çу е аш-какай комплексĕ çĕклеме çĕр лаптăкĕ уйăрсан – сĕнмелле кăна. Республика шучĕпе инженери системипе сооруженисем тума пулăшсан инвестици хывас тĕлĕшĕнчен те усă кӳрĕ, республика сумне те çĕклĕ.

Манăн хăш-пĕр çивĕч ыйту çинче чарăнса тăрас килет. Федераци министрĕ ирттернĕ канашлура эпĕ вĕсене çĕклерĕм, анчах нихăшĕ çине те тулли хурав илеймерĕм. Çавăнпа та эпĕ вĕсене халĕ Чăваш Ен Ял хуçалăх министерстви ячĕпе калатăп. Ун чухне те, халĕ те патшалăх влаçĕн органĕсем, банксем тата ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсен хушшинчи кредит, салук ыйтăвĕсене ансатлатма, кредит илмелли документсен шутне тата вăхăтне чакарма сĕннĕ пулăттăм. Кирлĕ документсене хатĕрлесе çитериччен кĕтни, манăн шухăшăмпа, хаклă вăхăта сая яни кăна.

Тавар туса илекенсене тата тепĕр ыйту канăçсăрлантарать, вăл – кредит проценчĕн сумми тата ăна тавăрмалли вăхăтпа условийĕ. Ку ыйтупа Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн влаç органĕсен банксемпе калаçса татăлса килĕшӳ тумалла, вĕсем тавар туса илекенсемшĕн меллĕ пулмалла.

●➡ 2 стр.

Саламлатпăр

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2014 çулхи авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче кăларнă 622-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн çĕр-шыв культурин, телекуравĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикинчи «Вăрнарти ача-пăча ӳнер шкулĕ» хушма пĕлӳ паракан муниципалитет бюджет учрежденийĕн преподавательне **Владимир Антонович МИХАЙЛОВА «РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

КУН хыççăн КУН
☎ 56-04-26, 28-82-91

Волонтерсем форума хатĕрленеççĕ

Шупашкарта иртекен Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форума тĕрлĕ çĕр-шывпа регионтан 2000 яхăн хăна килмелле. Вĕсене пулăшас, ертсе пырас тĕллевпе волонтерсене йыхравланă.

Шупашкар 2014

Çак кунсенче Шупашкарти кооперацин институтĕнче волонтерсен пĕрремĕш пухăвĕ иртнĕ. Унта ЧР Çамрăксен пуçарулăхĕн центрĕн тата ЧР Вĕренӳ министерствин ĕçченĕсем форум çинчен каласа панă, волонтерсен тĕллевĕсемпе паллаштарнă. Яваплă çынсем пĕлтернĕ тăрăх – форума техникумсемпе аслă шкулсен студенчĕсем хутшăнма килĕшнĕ (йышра – 500 ытла волонтер), çавăнпа кашни учреждение яваплă ĕç шанса панă. Калăпăр, Мускав автомобильпе çул-йĕр институтĕнче вĕренекенсем хăнасене аэропортсемпе вокзалсенче кĕтсе илĕç, кирлĕ вырăна çитме пулăшăç, Чăваш патшалăх университечĕ пресс-служба ĕçне туса пырĕ, педагогика университечĕн студенчĕсем тăлмачă тивĕçĕсене пурнăçлĕç.

А.ПЕТРОВ.

"Нацисен кросĕ" старта чĕнет

Вырсарни кун, авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнче 12 сехетре, Пĕтĕм Раççейри "Нацисен кросĕ" чупу старт илет. Ку ăмăрту – пирĕн çĕршыври спорт мероприятийĕсенчен чи пĕлтерĕшлисенчен пĕри.

Чупу Чăваш Енре те иртĕ, вун пĕрмĕш хут пулакан турнира 50 пине яхăн çын тухмалла. Тĕп старт Шупашкар заливĕ хĕрринче пулĕ. Кроса пур çын та хутшăнма пултарать: ватти-вĕтти, çамрăкки-яшши... Кашни ушкăн тĕрлĕ дистанцире тупăшĕ: ачапăчапа аслă ӳсĕмрисем 1000 метр чупĕç, арçынсемпе хĕрарăмсем – 8-12 километр, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç 2000-4000 метр. Ăмăрту яланхи пекех VIP-чупуран пуçланĕ, ертӳçĕсемпе депутатсем 2015 метра парăнтарĕç.

Çав кун Чăваш Ен тĕп хулинче тĕрлĕ мероприяти йĕркелеме палăртнă. Вĕсенчен пĕри – ирхи зарядка. Унта сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансем паллă спортсменсемпе пĕрле тухĕç.

А.МИХАЙЛОВ.

Ăслăлăхпа фантастика тĕнчи илĕртет

Шупашкарти ачасемпе çамрăксен библиотекинче "Ăслăлăх тата фантастика" кĕнеке фестивалĕ уçăлнă. Интереслĕ çынсемпе тĕл пулма тата фантастикăпа техника тĕнчипе паллашма çĕр ытла çын – Шупашкарти 20, 57-мĕш шкулсенче вĕренекенсем, техника кружокĕн членĕсем – пухăннă.

Фестивале яш-кĕрĕмпе хĕр-упараç валли "фэнтези" жанрĕпе çыракан, 40 ытла кĕнеке авторĕ Дмитрий Суслин уçнă. "Эпĕ ача чухне телевизорпа "Этот фантастический мир" кăларăм эфира тухатчĕ. Ăна эпир питĕ кăмăллаттăмăр. Фантастика кĕнекисене туянма сĕре йывăрччĕ ун чухне. Вĕсене тупма май килсен эх! хĕпĕртеттĕмĕр. Юлашки 15 çулта асăннă жанр, ирĕкĕлле талпăнса тухнăскер, йăл илчĕ, интереслĕ "чун çимĕçĕ" чылай тухрĕ",– палăртнă çыравçă. Çавăн пекех вăл чăн-чăн вулакан епле пулмалли "вăрттăнлăха" уçнă, пухăннисен ыйтăвĕсене хуравланă. Фестивале Чăваш Республикинчи çамрăк ăсчах Игорь Кожанов та хутшăннă. "Ăслăлăх тата фантастика" ятарлă презентаци хатĕрленĕ. Мероприятире техника пухас енĕпе ăсталăх сехечĕсем те йĕркеленĕ.

Р.ИВАНОВА.

16000 йывăç-тĕм лартма палăртнă

Авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа юпан 24-мĕшĕччен Шупашкарта тăван тăрăха упрамалли кĕрхи мероприятисем иртĕç. Çакнашкал йышăнăва алă пуснă Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков.

Çӳлерех асăннă тапхăрта тĕп хулара 16000 йывăç-тĕм лартма палăртнă. Çав йышра – лăсăллă 1600 йывăç (чăрăш, туя, хыр), 50 улмуççи, çулçăлли – 2850 (пилеш, çăка, хурăн, вĕрене, йăмра, тирек). 11 тĕрлĕ тĕм (барбарис, катăркас, спирея тата ытти те) савăнтарĕ хула çыннисене. Хула ертӳлĕхĕ кĕрхи ĕçсене ватти-вĕтти те хастар хутшăнасса шанать.

А.ГРОМОВА.

Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 10, çĕрле 8 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 761 мм, сывлăшри нӳрĕк 50 процент.

Кун тăршшĕ 12 сехет те 34 минут.

Ыран ăмăр çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 14, çĕрле 9 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 761 мм, сывлăшри нӳрĕк 50 процент.

Кун тăршшĕ 12 сехет те 29 минут.

ХЎТЛЁХ

"Укçа çук!" –

тени инвалидсене кўрентермелли сăлтав мар

"Хисеплĕ Людмила Геннадьевна! Сире судра пирĕн, инвалидсен, прависене хўтĕленĕшĕн чĕререн тав тăватăп. Утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче санатория каймалли путевкăпа тивĕçтерессине каяраха хăварма хирĕçленĕ хыççăн Чăваш Енĕн Сывлăх сыхлавĕн министерстви ман валли тинех путевка уйăрчĕ. Сире ăнăçусем сунатăп, малашне те пирĕн правасене хастар хўтĕлессе, çавна май эпир сирĕн ĕçпе яланах кăмăллă пуласса шанатăп".

Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи Людмила Бусова ватă çыннăн, Канаш районĕнчи Анат Сурăм ялĕнче пурăнакан инвалидăн Сергей Русаковăн, çак тавне мĕншĕн тивĕçнĕ-ха? Тĕплĕн çырас тăк – хаçат страницин самай пысăк лаптăкĕ кирлĕ пулĕччĕ. Сергей Васильевичшăн прокуратура чăннипех хўтлĕх органĕ пулса тăни вара куç кĕрет. Тепĕр тесен вăл мĕншĕн тав туни унăн çырăвĕнчен те курăнать. Çапах ĕç-пуçа кĕскен те пулин ăнлантарни-уçăмлатни кирлех.

Инвалид прокуратурăра пирвайхи хут тĕрĕслĕх шырамасть, надзор органĕн ĕçченĕсем хўтĕлеме тăрăшнине кура шăпах унран пулăшу ыйтать. Сăмах инвалидсене санаторире сипленмелли путевкăсемпе тўлевсĕр тивĕçтересси пирки. Федерацин 1999 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче "Патшалăхăн социаллă пулăшăвĕ çинчен" кăларнă 178-ФЗ № саккунĕн 6.1 тата 6.2 статйисенче инвалидсен социаллă пулăшу ĕçĕсен пуххипе усă курмалли право пуррине çирĕплетнĕ. Çав шутра – медицина кăтартăвĕсене кура санаторипе курорт сиплевĕнче пулмалли путевка илесси те. Çакăн валли федераци бюджетĕнчен çуллен укçа уйăраççĕ.

Саккунра çирĕплетнĕ тĕк – ăна пурнăçламалла. Çавна май сиплев кирлĕскерсене путевкăпа тивĕçтерес енĕпе чăрмав пулмалла мар пек. Анчах, пĕлетпĕр, хут çинчи пурнăçра яланах тўрре тухмасть. Сергей Русакова та путевка паман. Йăлăнса йăлăхнă хыççăн ватă çын прокуратурăна утнă.

Вулакан "Канаш тăрăхĕн çыннин ĕçĕпе мĕншĕн Ленин районĕн прокуратурин хута кĕме тивнĕ?" теме пăхĕ. Çапла, малтан Канаш прокуратуриех ĕçленĕ-ха, анчах кайран материалсем тĕп хулана, Ленин районне, килеççĕ. Сăлтавĕ паллă: явап тытаканни, республикăн Сывлăх сыхлавĕн министерстви, Шупашкарта, шăпах унăн яваплăхĕн территорийĕнче, вырнаçнă вĕт. Çавăнпа судра Ленин районĕн прокуратурин представителĕн тĕрĕслĕх шырама тивет.

– Министерствăн – пĕр хурав: "Укçа çук", – тет прокурорăн аслă пулăшуçи Людмила Бусова. – Çапла, укçи – федерацин, Мускавран килмеллискер. Унтан çителĕклĕ тата вăхăтра куçарманнипе инвалидсене путевкăпа туллин тивĕçтерейменнине сăлтавлаççĕ. Анчах çакна ниепле те тўрре тухмалли сăлтав вырăнне хума юрамасть. Çакна суд та пĕрре кăна мар çирĕплетрĕ, тавăçсене инвалидсен майлă татса пачĕ.

Русаков тĕслĕхĕнче, сăмахран, министерство 2012 çул валли Мускав 29,111 млн тенкĕ укçа уйăрнине палăртнă. Çав укçапа 25,8 млне яхăн тенкĕлĕх 1661 путевка туяннă, ыттине граждансем сиплев вырăнне тўлевсĕр кайса килессине йĕркеленме тăкакланă. 2013 çулта асăннă виçе кăшт пĕчĕкленнĕ – 26,7 млн тенке яхăн. 1436 путевка туяннă. Федераци бюджетĕнчен килекен укçапа хальхи вăхăтра инвалидсем 2011 çулта путевка ыйтса панă заявленисене тивĕçтерни çинчен пĕлтернĕ. Çакна тĕпе хурса министерство судран унăн йышăнăвне пурнăçлассине каяраха хăварма ыйтнă. Мĕншĕн тесен социаллă пулăшу ĕçĕсен пуххипе тивĕçтерме ыйтса çырнă заявленисен шучĕ Мускав уйăрнă ассигнованисен виçинчен пысăкрах. РФ Финанс министерствинчен путевкăсем, инвалидсен реабилитаци хатĕрĕсене туянма хушма укçа ыйтса янă çырăва та тăратнă.

Çук, суд министерство позицине йышăнман. Саккунпа килĕшўллĕн кунашкал тĕслĕхсенче суд актне пурнăçлассине шута илме тивĕç пысăк сăлтавсем пулсан кăна каяраха хăварма юрать. Мĕншĕн тесен апла туни пе тавăç тăратакансен прависене хўтĕлеме хăнăхса-вĕренсе çитнĕ темелле. Çавна май ытти районпа хула прокуратурисем материалсем пухнă, хатĕрленĕ чух асăрхаман самантсемпе ĕçлеме, кăлтăксене пĕтерме май пур. Судра вара, паллă, тепĕр чух вактĕвек те пысăк пĕлтерĕшлĕ – мĕнле йышăну пуласси çакăнтан та килет. Ахальтен мар ĕнтĕ вырăнсенчи прокурорсен пулăшуçисем час-часах вăл е ку ыйтупа Ленин районĕнчи ĕçтешĕсем патне шăнкăравлаççĕ – пĕр-пĕр инвалид прависене хўтĕлемелле чух канаш ыйтаççĕ.

Сергей Русаковăн сывлăха сыхлассипе çыхăннă пăснă прависене чăнласах хўтĕлессине каяраха паллă мар вăхăта куçарать.

Иккĕленўсĕр пĕтĕмлетў тунă: Мускав çителĕксĕр укçа уйăрать тени инвалидсен прависене пăсмалли сăлтав мар, министерствăн тăкаксене укçапа тивĕçтерес енĕпе бюджет заявкисем тăратас тĕлĕшпе туллин мерăсем йышăнмалла. Кăтартăвĕ, çўлерех палăртрăм, Анат Сурăм çынни тинех путевкăллă пулни.

Çакнашкал тĕслĕхсем вара – вунвун. Людмила Бусова та медицинăшăн яваплă ведомство тĕлĕшпе ыйтусем йышлине палăртать. Унăн сĕтелĕ çинче хайхи ĕçсем тĕркипе. Тĕп хулари Ленин районĕнче пурăнакансен тавăçĕсемпе çыхăнисем те пур, çапах тĕп пайĕнче – республикăри ытти хула-район çыннисен нушипе пăшăрханăвĕ.

"Ют" ĕçсем çапла Ленин районĕн прокуратури урлă иртнин лайăх енĕ те пур. Людмила Геннадьевна ăнлантарнă тăрăх – вырăнсенчи прокуратурăсен Сывлăх сыхлавĕн министерствипе "тавлашмалли" опычĕ пысăк тееймĕн, кунта вара çакнашкал ĕçсем-килĕшўллĕн унашкаллине туянмасть, çавăнпа тăкака саплаштарма хирĕçленĕ. Анчах А.-на контрактра пур аппарат тивĕçтермест – ун валли юрăхсăр. Усси çук япала мĕн тума кирлĕ? Ялăх илтекенскер аппаратшăн 23 пин тенкĕ тўленĕ. Унăн та тĕрĕслĕхе прокуратура урлă шырама тивнĕ. Сывлăх сыхлавĕн министерствин представителĕ судра "эпир унашкаллисене туянмастпăр" теме пăхнă пулин те Фемида инвалид пе тавăç тăратакансен прависене хўтĕлеме хăнăхса-вĕренсе çитнĕ темелле. Çавна май ытти районпа хула прокуратурисем материалсем пухнă, хатĕрленĕ чух асăрхаман самантсемпе ĕçлеме, кăлтăксене пĕтерме май пур. Судра вара, паллă, тепĕр чух вактĕвек те пысăк пĕлтерĕшлĕ – мĕнле йышăну пуласси çакăнтан та килет. Ахальтен мар ĕнтĕ вырăнсенчи прокурорсен пулăшуçисем час-часах вăл е ку ыйтупа Ленин районĕнчи ĕçтешĕсем патне шăнкăравлаççĕ – пĕр-пĕр инвалид прависене хўтĕлемелле чух канаш ыйтаççĕ.

Комсомольски районĕнчен кăна – тăватă теçетке ытла тавăç. Прокурорăн аслă пулăшуçи кашнинпех тимлĕ пулма, тĕплĕ ĕçлеме шантарать. Вăл е ку тавăça инвалид майлă татса панă хыççăн та алă сулмаççĕ: суд йышăнăвне мĕнле пурнăçланине куçран вĕçертмеççĕ – суд приставĕсем ку енĕпе мĕнле ĕçленине тĕрĕслеççĕ.

Çакна та палăртмалла: путевкăсем – социаллă пулăшу ĕçĕсен пуххин пĕр пайĕ кăна. Куславкка районĕнче, сăмахран, хăлха ялăх илтнĕ май усă куракан аппарат туяннипе çыхăннă тăкака саплаштарма ыйтнă. А. хăйне врач сĕннĕ модификациллĕ хатĕр туяннă. Сывлăх сыхлавĕн министерстви вара патшалăх контракчĕпе тăкакĕсене саплаштармалли йышăну кăларнă.

Тĕслĕхрен, Комсомольски районĕн прокурорĕ çўлерех асăннă саккун çине таянсах Хирти Выçли ялĕнче пурăнакан 41 çулти М. интересĕсене хўтĕлесе ЧР Сывлăх сыхлавĕн министерстви тĕлĕшпе суда тавăç тăратнă. Пĕрремĕш ушкăн инвалидне реабилитацин техника хатĕрĕсемпе – подгузниксемпе – тивĕçтермелле. Нормăпа килĕшўллĕн уйăхра 60 штук пулмалла. Хĕрарăм 2012 çулхи раштаврах "Комсомольскинчи ЦСОН" бюджет учрежденийĕнчен нўрĕке туртса илекен простыньсемпе подгузниксем ыйтса çырнă. Анчах унăн ыйтăвне тивĕçтермен. Ку тĕслĕхре те тĕп хулари Ленин районĕн сучĕ инвалид майлă пулнă: Сывлăх сыхлавĕн министерствин М.-а нормăпа килĕшўллĕн реабилитацин техника хатĕрĕсемпе тивĕçтермелле.

Инвалидсем саккунпа килĕшўллĕн хăйсене кресло-кўмесемпе, ытти хатĕрпе тивĕçтерме ыйтаççĕ. Шел те, çакă патшалăх хăйĕн вĕсен умĕнчи тивĕçне пурнăçлама яланах васкаманнипе сăлтавланать. Шăпа тени çак çынсене ахаль те кўрентернĕ. Апла тăк саккунра пăхнине пурнăçламаллах – çак çынсем хăйсем çине алă сулманнине, патшалăх тĕрев пама тăрăшнине туйса тăччăр.

– Сывлăх сыхлавĕн министерстви хăйсен ыйтăвне тивĕçтермессе, ыйту суд урлă кăна татăласса пĕлнĕ май хăшĕсем тўрех пирĕн пата килеççĕ, – каласа çăва вĕçленĕ май палăртрĕ Людмила Бусова. – Çапла, министерство йывăрлăхне те ăнланмалла. Вĕсем пытармасăрах каласçĕ: пĕрисем суд урлă путевка, тĕрлĕ хатĕр илнине кура черетри ытти çын ыйтăвне татса парасси тата каяраха куçать. Апла пулин те пирĕн позици çирĕп: черет вуçех те пулмалла мар. Халлĕхе, шел те, вăл пысăк. Çав вăхăтрах пирĕнтен пулăшу ыйтнă пĕр çын калани аса килет. Унăн ывăлĕ те инвалид – Мускавра пурăнать. Вăл тĕп хулара социаллă пулăшу шучĕпе кирлĕ хатĕрсене пĕр чăрмавсăрах тўлевсĕр илетмĕн. Ашшĕ çаплах калать: "Эпир вара Чăваш Енре суд урлă кăна илетпĕр. Пĕр çĕр-шывра пурăнмастпăр-им?"

> ✔ САККУНРА ÇИРĔПЛЕТНĔ ТĔК – ĂНА ПУРНĂÇЛАМАЛЛА. ÇАВНА МАЙ СИПЛЕВ КИРЛĔСКЕРСЕНЕ ПУТЕВКĂПА ТИВĔÇТЕРЕС ЕНĔПЕ ЧĂРМАВ ПУЛМАЛЛА МАР ПЕК. АНЧАХ, ПĔЛЕТПĔР, ХУТ ÇИНЧИ ПУРНĂÇРА ЯЛАНАХ ТЎРРЕ ТУХМАСТЬ

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Ял ĕçченĕ сывлăш çавăртăр

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Федераци министрĕ Раççей Президенчĕн сăмахĕсене урăхлатса «Банксем финанспа кредит политикине хăйсем палăртаççĕ, вĕсен ĕç-хĕлне ыттисем, вăл шутра – Президент та, Правительство пуçлăхĕ те, хутшăнма пултараймаççĕ», – терĕ. Манăн шухăшăмпа, ку – фактсене урăхлатма хăтланни, мĕншĕн тесен патшалăх банкĕсем РФ Правительстви палăртнă стратегиллĕ задачисемпе тĕллевĕсене пурнăçлама тивĕçлĕ. Çĕр-шыв тата тавар туса илекен çав вăхăтра мĕнле условире пулнине пăхмасăр, хăйсен ĕç-хĕлне мала кăлармасăр.

Федераци министрне эпĕ тепĕр ыйту та патăм, анчах вăл та хуравсăр юлчĕ. «Банксем мĕншĕн-ха РФ Правительствин ака уйăхĕнчи «Кредитлассин вăхăтне 8 çултан 15 çуллчен ўстересси çинчен» йышăнăвне пăхăнмаççĕ, паянхи кунччен те пĕр предприятин те, ял хуçалăх предприятийĕн ыйтăвне те татса паман?» – тенĕччĕ. Раççейре инвестпроектсем çĕр-çĕр кăна мар, пин-пин. Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствине кредит вăхăтне 8 çултан 15 çулччен тăсма ирĕк пур тата банксене заявка тăратнă ял хуçалăх предприятийĕсене палăртма, вĕсен ячĕпе хута кĕрсе кирлĕ хутсем çитерме сĕнетĕп. Ячĕшĕн мар, тавар туса илекенпе пĕрле тата унăн интересĕсене хўтĕлесе.

Тепĕр ыйту субсиди уйăрассипе çыхăннă. Патшалăх Думинче федерацин «Ял хуçалăхĕн аталанăвĕ çинчен» саккунне улшăнусем кĕртме хатĕрленеççĕ. Ыйту ял хуçалăх ĕçченĕсене илнĕ кредита субсидилессипе çыхăннă. Уçăмлăрах каласан ял хуçалăх таварĕ туса илекен кредит учрежденийĕсене кредит суммине тата федераци е республика бюджетĕнчен саплаштарман процентăн пайне кăна тўлетĕр. Ку ял хуçалăх предприятийĕн финанс йывăрлăхне сирме пулăшĕ, производствăна аталантарма кирлĕ укçа-тенкĕне урăх тĕллевпе усă курма хистемĕ. Тата пуянах мар тавар туса илекен кредитăн çулталăкри ставкине 12-рен пуçласа 15% таран тўленине бюджетран тавăрса парассине кĕтсе пурăнмĕ. Енчен те йывăрлăхсене пăхмасăр Чăваш Республикин бюджечĕ шутĕнчен субсиди суммине яланах тўлесе тăраççĕ тăк, федераци бюджетĕнчен куçарса парассине тепĕр чухне темиçе уйăх кĕтме тивет. Ку вара предприяти ертўçи умне йывăрлăх кăларса тăратать: рабочисем вăхăтра шалу илеймеççĕ, тĕрлĕ шайри бюджетсене каякан тўлев вăхăчĕ вăрăмланать т.ыт.те. Анчах РФ Ял хуçалăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх – çакă 2015 çулта кредит килĕшĕвĕсем тунисем валли кăна. Ку – кăшт маларах, йывăр вăхăтра кредит илнĕ ял хуçалăх таварĕ туса кăларакан предприятисене хисеплеменни тата пулăшманни. Вĕсем çавăншăн субсидие 6-8 уйăх кая юлса илеççĕ. Республикăри Ял хуçалăх министерстви ку ыйтăва татса парассине хăйĕн тўпине хывсан аванччĕ. Кредита хăш çул илнине пăхмасăр ял ĕçченне пулăшни ăна сывлăш çавăрса яма май паниех.

Ун чухне хурав илеймен виçĕ ыйтăва республикăри патшалăх влаçĕн трибуни çинчен сире, хисеплĕ ĕçтешсем, пĕлтертĕм. Вĕсем, виççĕшĕ те, банкпа тавар туса илекен хушшинчи çыхăнăва кăтартаççĕ. Укçа-тенкĕ кăна ял хуçалăхне аталантарĕ, çўллĕ шая çĕклĕ. Пирĕн Ял хуçалăх министерствин ял хуçалăх таварĕ туса илекенсене лизингăн çĕнĕ схемипе, республика бюджечĕ хутшăннипе, çĕнĕ техникăпа тивĕçтерес ыйтупа та ĕçлемелле.

Сессире тухса каланинчен

Дмитрий ЕВСЕЕВ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ: «Кун йĕркинчи ыйтăва сўтсе явнă чухне республикăна федераци министрĕ килсе кайни пирки тăтăш асăнчĕç. Хăшпĕр депутат çак визит пирки кăна каласрĕ. Икĕ япала çинчен калаймасăр тăраймастăп. Пĕрремĕшĕнчен, ял хуçалăхне Федоров Президент пулнă чухнехинчен никам та шар кăтартман. Çавăнпа та эпĕ унăн сĕнĕвĕсене шута илмелле тенипе килĕшместĕп. Иккĕмĕшĕнчен, вăл хисеплĕ юрист. Ял хуçалăхĕ, тĕрĕсрех – аграри секторĕ, патне пыма унăн мĕнле тивĕç пур – эпĕ çакна ăнланмастăп».

■ **Ю.СТЕПАНОВ хатĕрленĕ**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

Уçман çереме çаврăннă уй

Кăмăлĕпе те, чун-чĕрипе те, ĕçĕпе те хăйсем хыççăн тарăн йĕр хăварнă нумай-нумай çынна пĕлетĕп. Йывăрлăхсене парăнтарса малалла хăюллăн талпăннă маттурсем ял хуçалăхĕнче те йышлă. Халĕ вĕсен ячĕсене районсен энциклопедийĕсенче куратпăр, çав çынсем паянхи саманара ўссе çитĕнекен яш-кĕрĕмшĕн чăннипех çутă çăлтăр пулнине туйса савăнатпăр, вĕсempe тивĕçлипех мухтанатпăр.

Аслă Çĕнтерў хыççăн яла таврăннă паттăрсем вăрçă юхăнтарса хăварнă ял хуçалăхне ура çине тăратнă: фермăсем, çуртсем, производство объекчĕсем çĕкленĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, тырă ўстернĕ... Çав çулсенче ялсене малашлăхлисем тата малашлăхсăррисем çине пайланаччĕ. Халĕ çакă яр ююçăн курăнать: тĕрĕс мар пулнă вăл. Ялăн малашлăхĕ пирки пыракан тавлашусенче тĕрĕс шухăшлав çиеле тухрĕ-тухрех. Малашлăхсăр ялсем çук! Акă мĕнле чĕнў янăрать паян.

Пĕчĕк ялсем патне те шанчăклă çулсем çитрĕç, кил хуçи хĕрарăмĕсем çут çанталăк газĕпе усă курма тытăннăранпа та вăхăт самаях иртрĕ. Çĕнĕ палăрăмсем чунчĕрере савăк туйăм çуратаççĕ, анчах тарăн шухăша яракан сăнсем умĕнчен те куçа хупса иртме çук. Чылай çĕрте уйсенче тырă кашламанни, вĕсем мăян-пиçенпе, анра çарăкпа хупланни ассăн сывлаттарать. Пытармăпăр: ку тĕлĕшпе Чăваш Ен Пуçлăхĕ те, Правительство та, Ял хуçалăх министерстви те усă курмасăр выртакан пушă çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртессипе çыхăннă ыйтăва кун йĕркинче тытаççĕ кăна мар, вăл мĕнлерех пурнăçланнине те тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ. Анчах чылай çул капланса пынă çитменлĕхкăлтăкран тăруках хăтăлса тухма ниепле те май килмест çав.

Тăван ялăма – Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шуртана – ура ярса пуснă-пусманах кăкăрăма тем хĕстернĕн туйăнчĕ. Тарасаллă çăл патне васкамасăр çитсе тăтăм. Пусă шывĕ те пусараймарĕ ăшчикĕм çуннине... Ара, тахçан путене вĕçсе тухайми тырпул ўстернĕ хирсенче талккишпех çум курăксен «вăрманĕ» кашлать-çке. 40 киллĕ ялта çын сахал, вĕсем пурте тенĕ пекех – пенсионерсем. Çĕре вара вăй питти çынсен аллисем кирлĕ. Ăçтан иллекен простыньсемпе подгузниксем ыйтса çырнă. Анчах унăн ыйтăвне тивĕçтермен. Ку тĕслĕхре те тĕп хулари Ленин районĕн сучĕ инвалид майлă пулнă: Сывлăх сыхлавĕн министерствин М.-а нормăпа килĕшўллĕн реабилитацин техника хатĕрĕсемпе тивĕçтермелле.

Инвалидсем саккунпа килĕшўллĕн хăйсене кресло-кўмесемпе, ытти хатĕрпе тивĕçтерме ыйтаççĕ. Шел те, çакă патшалăх хăйĕн вĕсен умĕнчи тивĕçне пурнăçлама яланах васкаманнипе сăлтавланать. Шăпа тени çак çынсене ахаль те кўрентернĕ. Апла тăк саккунра пăхнине пурнăçламаллах – çак çынсем хăйсем çине алă сулманнине, патшалăх тĕрев пама тăрăшнине туйса тăччăр.

– Сывлăх сыхлавĕн министерстви хăйсен ыйтăвне тивĕçтермессе, ыйту суд урлă кăна татăласса пĕлнĕ май хăшĕсем тўрех пирĕн пата килеççĕ, – каласа çăва вĕçленĕ май палăртрĕ Людмила Бусова. – Çапла, министерство йывăрлăхне те ăнланмалла. Вĕсем пытармасăрах каласçĕ: пĕрисем суд урлă путевка, тĕрлĕ хатĕр илнине кура черетри ытти çын ыйтăвне татса парасси тата каяраха куçать. Апла пулин те пирĕн позици çирĕп: черет вуçех те пулмалла мар. Халлĕхе, шел те, вăл пысăк. Çав вăхăтрах пирĕнтен пулăшу ыйтнă пĕр çын калани аса килет. Унăн ывăлĕ те инвалид – Мускавра пурăнать. Вăл тĕп хулара социаллă пулăшу шучĕпе кирлĕ хатĕрсене пĕр чăрмавсăрах тўлевсĕр илетмĕн. Ашшĕ çаплах калать: "Эпир вара Чăваш Енре суд урлă кăна илетпĕр. Пĕр çĕр-шывра пурăнмастпăр-им?"

Çамрăксем çук. Колхоз саланса кайнă хыççăн вĕсем пурте тăван тăрăха пăрахса Мускава е Çурçĕре, е Çĕпĕре тухса кайнă. Паян-ыран месерле яла кайма хатĕрленекен мучи-кинемейсем çĕр-аннемĕре пăхса, тирпейлесе тăма вăй-хал çитереймеççĕ. Акă мĕншĕн турă пилленĕ ытарми кĕтес /тăван ял çумĕнчех вăрман пур/ çын çитменнипе хавшама-юхăнма тытăнни куç кĕрет. Мана тĕрĕс ăнлантăрччĕ вулакан: эпĕ ялта çĕр ĕçне хисеплекен çынсем кăна пурăнмалла тесшĕн мар. Тĕрлĕ ĕç тума пĕлекен те, хальхи йышши хăватлă техникăпа кал-кал ĕçлекенсем те кирлĕ. Пур-ха вĕсем, анчах ялтан тухса каяççĕ-çке. Çак пулăма ниепле те чарса лартма май çук. Хуçасăр тăрса юлнă çĕрсен ыранхи шăпишĕн çамрăксен, ĕнерхи çĕр хуçисен ачисен яваплă пулмалла та. Темшĕн-çке çав туйăм сисĕнсе каймасть паянхи яш-кĕрĕмре.

Чăн та, статистика хатĕрлекен вăтам кăтарту хыçĕнче курма та çук ăна, темиçе çул сухаланмасăр-акăнмасăр выртакан çĕре. Кантăкран та лайăх курса илеймĕн çав пусăсене. Вĕсем тăрăх çуран утса тухмалла, кашни лапамтĕмескене алăпа сĕртĕнсе пăхмалла, çаван чухне кăна çĕр-аннемĕрĕн ыратăвне-тилмĕрĕвне чун-чĕрепе туллин туйса илме пултарăн.

Сăмах та çук, паянхи механизатор – уйри пĕртен пĕр ĕçчен. Шел, вĕсен йышĕ куç умĕнчех катăлса пырать. Чылай хуçалăхăн техника паркĕнче хуçасăр трактор-комбайн ларнине куратăн. Механизатор кадрĕсен ыйтăвĕ çивĕч. Хăй вăхăтĕнче МТС вĕрентсе кăларнă сухаçăсем çирĕп вăй шутланнă. Халĕ вĕсем çук ĕнтĕ. Çамрăксем хурçă ута çўретесшĕн мар. Хăш хуçалăхра вăтăр çула çитмен механизаторсем пурши? Вĕсем пурте тенĕ пекех аллă çулран пуçласа утмăла çитсе пыракансем. Йĕпреç районĕнчи Ильич ячĕллĕ колхозра çитмĕл урлă каçнă тракторист суха тунине курнăччĕ.

Династисем те çукпа пĕрех. Ачине трактор рульне тыттарассишĕн хыпăнакансем кашни ялтах пурччĕ унччен.

Хурçă утта çўретекенсен çемйисене чылайранпа сăнаса тăнă май вĕсенче çакăн пек уйрăмлăха асăрхатăп: темшĕн-çке çамрăксенче ашшĕ-аслашшĕне канăçсăрлантарнă туйăм çук. Çĕр-аннемĕре чăн-чăн хуçа кăмăлĕпе юратса хак параслăх çук вĕсенче. Шăпах çаван йышшисем тухса каяççĕ те паянхи ялсенчен. Ветерансен чĕрисем питĕ ыратаççĕ, вĕсем уй-хире юхăнтарса ярасшăн мар, пурнăç тĕллевне хура тăпра тивлечĕпе пархатарне ўстерсе пынинче курасшăн.

Халĕ пур çĕрте те çĕнĕлĕхсене ĕçе кĕртме тăрăшаççĕ. Вĕсене тĕпе хуракан хуçа лăпланса лармасть, пурнăç опычĕ, ăсталăх çине таянса, çĕннине, усăллине çул парать. Паян ял чăннипех те çăмăл мар ларутăрура. Вăл киввине хыçа хăварнă, çĕннине вара ниепле те хăйне кирлĕ пек хăнăхса çитеймест-ха. Ял хуçалăх производствине малалла аталантарас ĕç нумай специалист кирлине ас тутарать. Кадрсене ялта çирĕплетсе хăварас ыйту чăннипех пысăк тимлĕх тата яваплăх ыйтать. Çакна татса памасăр палăрăмлă çитĕнўсем тăвасси пирки калаçни те кăлăхах. Халлĕхе ыранхи çĕр хуçисем шкулсене пĕлў илме çўреççĕ, пурнăçа кĕнеке тăрăх хаклама вĕренеççĕ. Пурăна киле çав çынсем тăван çĕр-аннемĕрĕн пуянлăхне ўстерессине хăйсен тĕп тивĕçĕ туса хурасса шанас килет.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

Кăçалхипе вун пĕрмĕш хут

Йĕпреç районĕнчи "Красный партизан" колхозăн хăйĕн аэродром пур. Ăна вăтăр çул каялла ĕçе кĕртнĕ. Ку тăрăхра авиацин шанчăклă тусĕ йышлă. Вĕсем пуçарăвĕпе вырăнти аэродромра 2004 çултан пуçласа кăвак тўпене кăмăллакансен слетне ирттересси йăлана кĕнĕ.

Çак мероприятие Пучинкесем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çулĕсенче икĕ урасăр юлнă хыççăн Йĕпреçри вĕçев шкулĕнче "иккĕмĕш çунат" "туяннă" Алексей Маресьева халаллана. "Маресьевçăсен" слетне малтанхи вăхăтра Чăваш Республикинчи вĕçевçĕсем кăна хутшăннă пулсан, ытти çулта вĕсен çемйи Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен килнĕ хастарсемпе пуянланнă. Кăçалхи слетра Мускав, Владимир, Хусан, Йошкар-Ола хулисен чысне хўтĕленĕ летчиксем те хăйсен ăсталăхне кăтартнă. Икĕ тăкĕ çук. Эпир юлашки 5 çулта çавăн пек çĕрсене пĕтĕмпех пусă çаврăнăшне кĕртрĕмĕр. Сăмах май, кăçал тырă тухăçĕ енĕпе районта каллех малтисен йышне тăрас шанăç пур. Малтанхи кăтартусем çавна çирĕплетсе калама хистеççĕ. Агрофирмăри вăтам тухăç 25 центнертан кая мар».

Алексей ЦЫГАНОВ, «Цыганов» ХФК ертўçи: «Эпĕ ĕçе тин кăна пуçăнакан фермерха. Ятарлă хуçалăх йĕркеленĕреннех вăхăт нумай иртмен, икĕ çулталăк кăна. Çак тапхăрта «Красный фронтовик» колхозăн пулнă 153 гектарлă çĕр лаптăкне йĕркене кĕртсе çитертĕм, унта тыр-пул акса, çĕр улми лартса тума тытăнтăм. Пĕрремĕш икерчĕ хулăн пулчĕ теме сăлтав çук. Тăкаксем майĕпен саплашăнса пыраççĕ. «Ĕçе пуçăнакан фермер» патшалăх программине пурнăçлама хутшăнса кăçал 1 млн та 100 пин тенкĕлĕх грант выляса илтĕм. Пулăшу çав тери вырăнлă пулчĕ. Çитес çулта пусă çаврăнăшне тепĕр 50 гектартан кая мар кĕртес тĕллевлĕ.

Унччен юхăнма-хавшама пуçланă çĕрсене «иккĕмĕш пурнăç» пама хутшăннăшăн хама телейлĕ çын вырăнĕнче курса тăратăп».

Валерий ГАВРИЛОВ, Йĕпреç район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ: «Кăçал районти хуçалăхсем тĕш тырă акса тумалли çĕрсен лаптăкĕсене пĕлтĕрхинчен 350 гектара яхăн ўстерчĕç. Ку енĕпе уйрăмах тăрăшулăхпа палăрнисенчен сысна ĕрчетекен «Рассвет» предприятие ырă сăмахпа аса илни вырăнлă. Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Виталий Русков ертсе пыракан предприяти юлашки 2 çулта кăна унччен Ленин ячĕллĕ колхозăн шутланнă 500 гектар çĕре пусă çаврăнăшне кĕртме пултарчĕ. Панкрута тухнă хуçалăхăн анра çарăкпа мăян ўсекен уйĕсене ĕçе кĕртессипе Каçал тăрăхĕнчи «Пайкас» тата «Рассвет» ял хуçалăх кооперативĕсем те пуçаруллă пулчĕç.

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртесси малалла пырать. Енчен те икĕ çул каярах хуçасăр çĕрсен лаптăкĕсем 900 ытларах гектар çинче пулнă тăк паянхи куна 420 гектар çеç юлнă. Район администрацийĕ тата ял хуçалăх пайĕ çак ыйтăва кун йĕркинчех тытаççĕ».

Эдуард МАРУШЕВ, «Путиловка» агрофирма» ертўçи: «Пĕчĕк Упакассипе Çиçĕмкасси ялĕсен тăрăхĕнче пушă выртакан çĕр лаптăкĕ çук. Эпир юлашки 5 çулта çавăн пек çĕрсене пĕтĕмпех пусă çаврăнăшне кĕртрĕмĕр. Сăмах май, кăçал тырă тухăçĕ енĕпе районта каллех малтисен йышне тăрас шанăç пур. Малтанхи кăтартусем çавна çирĕплетсе калама хистеççĕ. Агрофирмăри вăтам тухăç 25 центнертан кая мар».

Алексей ЦЫГАНОВ, «Цыганов» ХФК ертўçи: «Эпĕ ĕçе тин кăна пуçăнакан фермерха. Ятарлă хуçалăх йĕркеленĕреннех вăхăт нумай иртмен, икĕ çулталăк кăна. Çак тапхăрта «Красный фронтовик» колхозăн пулнă 153 гектарлă çĕр лаптăкне йĕркене кĕртсе çитертĕм, унта тыр-пул акса, çĕр улми лартса тума тытăнтăм. Пĕрремĕш икерчĕ хулăн пулчĕ теме сăлтав çук. Тăкаксем майĕпен саплашăнса пыраççĕ. «Ĕçе пуçăнакан фермер» патшалăх программине пурнăçлама хутшăнса кăçал 1 млн та 100 пин тенкĕлĕх грант выляса илтĕм. Пулăшу çав тери вырăнлă пулчĕ. Çитес çулта пусă çаврăнăшне тепĕр 50 гектартан кая мар кĕртес тĕллевлĕ.

Унччен юхăнма-хавшама пуçланă çĕрсене «иккĕмĕш пурнăç» пама хутшăннăшăн хама телейлĕ çын вырăнĕнче курса тăратăп».

Çак мероприятие Пучинкесем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çулĕсенче икĕ урасăр юлнă хыççăн Йĕпреçри вĕçев шкулĕнче "иккĕмĕш çунат" "туяннă" Алексей Маресьева халаллана. "Маресьевçăсен" слетне малтанхи вăхăтра Чăваш Республикинчи вĕçевçĕсем кăна хутшăннă пулсан, ытти çулта вĕсен çемйи Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен килнĕ хастарсемпе пуянланнă. Кăçалхи слетра Мускав, Владимир, Хусан, Йошкар-Ола хулисен чысне хўтĕленĕ летчиксем те хăйсен ăсталăхне кăтартнă. Икĕ

Хушма кăларăм

Вёренӳ

МАТТУР!

Турă пани çумне пёлӳ хушсан

12 ÇУЛТИ ЧĂВАШ ХЁРЁ ПАРИЖА ÇИТСЕ КУРНĂ, "ЧĂН-ЧĂН" ХЁЛ МУЧИРЕН ПАРНЕ ИЛНЁ, ДЖЕКИ ЧАНА ЎКЕРЧЁКЁПЕ ТЁЛЁНТЕРНЁ

Сăмахăм – Вăрмар поселокёнче пурăнакан, кунти вăтам шкулта пиллёкмёш класра пёлӳ пухакан Аннета Прохорова çинчен. Пёрре пăхсан ыттисенчен нимёнпе те уйрăлса тăманскерте вăтанчăклăх çирёп вырнаçнине кăна ăнланса илетён. Чунёнче мён тери пуян тёнче тымар янине вара унпа самай хушă куçа-куçăн уççăн калаçсан кăна пёлеетён.

Аня хăй сисмесёрех пёчёк çăлтăрсен шутне кёрсе пынине тёлёнсе йышăнать: "Эпё чапа тухма нимён те туман. Кăмăл пур чухне алла кăранташ тытатăп та, шурă хут илетёп те ўкеретёп çеç". Акă нумаях пулмасть Интернетра паллă актер Джеки Чан сённё конкурс пирки пёлтерӳ асăрханă та халăхсен туслăхён, толерантлăх паллине – Упа çурине – хăй ăсласа ўкернё. Янкăр тўпе, асамат кёперё, чечекленекен улăх, тăрă кўлё, шыври чёрё чунсем... – "Çут çанталăкри упа çури" ят панă вăл хăй хайланă ўкерчёке. Тёнчен тёрлё кётесёнчи ачасем хутшăннă конкурсра çитёнӳ тăвасса ёмётленмен те. Вăхăт нумай та иртмен – Джеки Чана уйрăмах килёшнё, тёрлё номинацире çёнтернё ўкерчёксем çинчен Интернетра пёлтернё. 11 çула çитмен ачасен хушшинче мала тухнисен йышёнче – Чăваш Ен хёр ачи Аннета Прохорова та.

Тёрёссипе, Вăрмар поселокёнчи пултаруллă хёр ачан портфолио папкинче сумлă пёрремёш çитёнӳ мар ку. Тёслёхрен, хăйён тыткăнлакан ўкерчёкне пулах иртнё çулла Аня амăшёпе пёрле Парижа, Дисней-Ленда çитсе курнă.

– Çуллахи канăва кам мёнле ирттерни çинчен "Дисней" компани ўкерчёксен конкурсё йёркеленёччё. Аня шыв айёнче ишекен хёр ачана ўкерчё, пёрремёш вырăна тухрё. Парне тёлёнмелле вăйлă пулчё: асăннă компани шучёпе Парижа çитсе унăн тёлёнмелле вырăнёсенче пултăмăр. Хёрёмён тивлечёпе мар тăк кашниех пулма ёмётленекен çёр-шыва çитсе кураймастăм, – тёпренчёкён турă панă пултарулăхёшён хёпёртет амăшё Дина Анатольевна.

Чăн та, мён пёчёкрен ўкерме юратакан хёрёшён вăл – маяк вырăнёнчех. Акăлчан чёлхи вёрентекенё хăйён пултарулăхне аталантарассишён те тăрăшать. Паха çак ен майёпен Аньăна куçса пырать. Тёнчере ача-пăча йышёнче иртекен ăмăрту-конкурс пирки Интернетри тёрлё çăл куçран вуласа пёлекенни те паллах – Дина Анатольевна.

– Новокузнецкри "Писательсен союзё" издательство ачасене тёрлё çыравçă хайлавёсене иллюстрацилеме явăçтарать. Пёчёккисен хăйсен юмахёсене те суйласа илсе пичетлет. Çапла "Новые сказки" юмах пуххин 4 томё кун çути курчё. Хăш-пёр кёнекене Аньăн ўкерчёкёсем те кёчёç, пёринче вара вăл хайланă "Буратинăна çăлни çинчен" юмах вырăн тупрё, – хёр пёрчин чун киленёçё ўкерессипе кăна чикёленменнине палăртаççё амăшён сăмахёсем.

Ўкерессипе çырасси юнашарах пыракан пултарулăх енёсем пулнине Аньăн юратнă вёрентекенё – вырăс чёлхипе тата литературипе пёлӳ паракан Валентина Табакова та – çирёплетет:

– Пёррехинче пиллёкмёшсемпе литература урокне хурăн ращинче ирттертёмёр. "Кёрхи вăрман" темăпа сочинени çырма хатёрленнё май çут çанталăка сăнарăмăр. Вёренекенсем хăйсене кирлё пулакан сăмах майлашăвёсене тетрадь çине çырса пычёç. Аня Прохорова унччен те пулмарё хут çине пулас ўкерчёкён ёлкине ăсталама тытăнчё. Çапла куç умёнче тёлёнмелле илем янтăлама ăста çак вёренекен. Ун пеккисемпе пирён, вёрентекенсен, питё тимлё пулмалла: çурăлас чечек вăхăтсăр ан шантăр, вăй илсех пытăр. Çакна асра тытса уроксене ку класра уйрăмрах йёркелеме тăрăшатăп. "Ман тавра – тёнче" – çакнашкал шухăша тёпе хуратăп. Чăн та, Аня малтанрах класри ачасенчен те ютшăнатчё. Мён пытармалли, пултаруллисене ăмсанаççё вёт, кёвёçеççё те. Халё, сисетёп, уçăлса пырать. Эпё хам та – пултарулăх çынни. Сăвăсем хайлама, вёсене юрра хывса гитарăпа юрлама кăмăллатăп. Шансах тăратăп: Аньăпа пёр чёлхе тупса пёрпёр пысăк ёç йёркелёпёрех.

Кирек мёнле пултарулăх та этеме ырăлăха вёрентме, илемленне турттăнмашкăн хистеме тивёç. Аня ырă кăмăллăхё унăн ёçёсенче те палăрать. Акă умăмра – хёр ачана Аслă Устюгран Хёл Мучи янă Тав çырăвё. Икё çул каялла "Там, где живет Дед Мороз" конкурса хутшăннă иккен Аня. Ачасен Хёл Мучи резидециййён лапамне ўкерсе кăтартмалла пулнă. Шухăшлава аталантарма çав тери юратакан чăваш хёр ачи акă мён-мён тăрăшатăп. "Ман тавра – тёнче" – çакнашкал шухăша тёпе хуратăп. Чăн та, Аня малтанрах класри ачасенчен те ютшăнатчё. Мён пытармалли, пултаруллисене ăмсанаççё вёт, кёвёçеççё те. Халё, сисетёп, уçăлса пырать. Эпё хам та – пултарулăх çынни. Сăвăсем хайлама, вёсене юрра хывса гитарăпа юрлама кăмăллатăп. Шансах тăратăп: Аньăпа пёр чёлхе тупса пёрпёр пысăк ёç йёркелёпёрех.

Кирек мёнле пултарулăх та этеме ырăлăха вёрентме, илемленне турттăнмашкăн хистеме тивёç. Аня ырă кăмăллăхё унăн ёçёсенче те палăрать. Акă умăмра – хёр ачана Аслă Устюгран Хёл Мучи янă Тав çырăвё. Икё çул каялла "Там, где живет Дед Мороз" конкурса хутшăннă иккен Аня. Ачасен Хёл Мучи резидециййён лапамне ўкерсе кăтартмалла пулнă. Шухăшлава аталантарма çав тери юратакан чăваш хёр ачи акă мён-мён çамрăк тусёсене "килти" страницăн логотипён уяв версине ўкерме сёнет. Чăваш халăхён культурине ăша хывакан хёр ача пурнăç йывăçне сăнлакан чăваш тёррипе, хăмла пучахёпе илемлетет хăй сённё тёслёхе. Çак ўкерчёк те хуçине çитёнӳ парнелет: 300 ўкерчёк хушшинче финала тухнă 30-шён йышне лекет вăл.

Маларах эпё Аня пултарулăхё ўкерессипе кăна чикёленмест тесе палăртрăм. Иккёмёш çул Вăрмарти музыка шкулёнче хушма пёлӳ илет вăл. Лира Ковалевская хăнăхтарса пынипе фортепьяно калама вёренет. Иртнё çул вёçёнче "Россия К" телеканалпа "Учительская газета" йёркелесе ирттернё телекурав пётём тёнчери музыка "За кулисами Щелкунчика" конкурсне хутшăнма май килет. Унтан та тав çырăвёпе таврăнаççё Вăрмар ен пултаруллă ачисем.

– Пурнăçра кам пуласшăн эсё? – ыйтатăп Аньăран сыв пуллашиччен.

– Хальлёхе нимёнле професси çинче те чарăнса тăман-ха эпё. Кирек кам пулсан та çынсене усă кўрёп, – пулчё хурав.

■ **Ирина ПУШКИНА**

● *Аня юратнă вёрентекенёпе В.Табаковăпа.*

✔ УН ПЕККИСЕМПЕ ПИРЁН, ВЁРЕНТЕКЕНСЕН, ПИТЁ ТИМЛЁ ПУЛМАЛЛА: ÇУРĂЛАС ЧЕЧЕК ВĂХĂТСĂР АН ШАНТĂР, ВĂЙ ИЛСЕХ ПЫТĂР

● *Ўкерчёксенче наци хăйне евёрлёхёпе те усă курать.*

ХЎТЁЛЕВÇЁСЕМ

«Атăлçи шурăм пуçёнче» – пирён пуласлăх

ЭРЁНПУР ОБЛАÇЁНЧЕ ÇАРПА СПОРТ ВĂЙЙИСЕМ ПЫРАÇÇЁ



РФ Президенчён федерацин Атăлçи округёнчи полномочиллё представителё Михаил Бабич пуçарнипе çёнёрен чёртсе тăратнă ăмăртусем ку тăрăхра иккёмёш çул иртеççё.

Спортăн тёрлё тёсёпе тата тăван çёр-шывăн кун-çулёпе кăсăкланакан пулас хўтёлевçёсен вăййисене кăçал 14 регионтан пухăннă. Вёсем тёрлё конкурспа ăмăртусенче вăй виçеççё, концертсемпе КВНсене хутшăнаççё. Вăйăсен пёрремёш кунёнче çамрăксем хăйсемпе паллаштарнă: республикăсемпе облаçсен гимнёсем янăранă, тăван тăрăхри паллă вырăнсемпе сумлă çынсем çинчен каласа панă. Кадет шкулёсемпе класёсем ăсталăх сехечёсем ирттернё.

106-мёш вёренӳ центрёнче иртнё турнирсен çёнтерӳçисем палăрнă. Граната ывăтассипе Эрёнпур, Пушкăртстан тата Тутарстан командисем мала тухнă. Вăй гимнастикинче /яшсем турник çинче туртăннă, хёрсем «отжимани» тунă/ ăмăрту хуçисемпе Пушкăртсем пуринчен маттуртарах пулнă. Ку тупăшура Чăваш Ен командине те ăннă: виççёмёш вырăн йышăннă. Чăрмавсем урлă чупса каллех Эрёнпурсем çёнтернё. Çавăн пекех çамрăк спортменсем чупас, ишес, автомата салатса пуçтарас, перес енёпе тупăшнă.

Кăçалхи вăйăсем хăйне евёрлё, кашни куна уйрăм темăпа йёркеленё: çар вăййисен кунё, ятарлă подразделенисен кунё, казаксен кунё т.ыт.те. Çав кунсенче çамрăк армеецсем патне çар çыннисем килеççё. Вёсем хăйсен ёç-хёлё, çар пурнăçё, унти уйрăмлăхсем çинчен каласа параççё. Нумаях пулмасть шкул ачисем çар техникипе паллашнă, салтаксемпе тата офицерсемпе курса каласнă

■ **А.МИХАЙЛОВ**

ППЭ – 2015

Вёренекенсене мёнле улшăнусем кётеççё?

2014-2015 вёренӳ çулёнче Раççей шкулёнчен вёренсе тухакансем валли экзаменсенче улшăнусем пуласса систернёччё. Чи курăмлисенчен пёри: ППЭ тытма ирёк илмешкён шкултан вёренсе тухакансен вырăсла сочинени ăнăçлă çырнă хыççăн кăна май килё.

Çак улшăнăва тёрёслеве кёртме Владимир Путин Президент хушăвё-сёнёвёпе йышăнчёç. Сочинение шкул ачисем экзаменсен тёп кампанийё пуçланиччен, раштав уйăхёнчех, çырёç. Тивёçлё хаклав илейменнисем нарăс е ака-çу уйăхёсенче çыру ёçне çёнёрен пурнăçласа пăхма пултарёç. Рособрнадзор пёлтернё тăрăх – хевтесёр е сусăр ачасемшён сочинение изложенипе ылмаштарма юрать.

Сочиненипе изложение икё тёрлё çеç хакласçё: «шута илнё» е «шута илмен». ППЭсене «шута илнё» текен хаклавлисен çеç тытма ирёк пур.

Пётёмлетӳ сочиненийён ыйтăвёсемпе ёçлекен канаш çакнашкал темăсене суйласа илнё: «Недаром помнит вся Россия...» /М.Ю.Лермонтовăн 200 çулхи юбилейё тёлне/, «Вопросы, заданные человечеству войной», «Человек и природа в отечественной мировой литературе», «Спор поколений: вместе и врозь», «Чем живы люди?»

Ку таранччен вырăс чёлхипе ППЭ тытнă чухне кёске шухăшлав-эссе çыраканччё. Кунашкал ёçе те хальлёхе сыхласа хăварнă. Çак предметпа экзаменра хурава суйласа илмелли заданисен пайё малашне пулмё. Сăмах май, çакнашкал ёçсен калăпăшё ытти предметсен экзаменёнче те пёчёкленё. Рособрнадзор çирёппёнех палăртать: тест заданийёсем пулмасан та экзаменсен кăткăслăх шайё чакмё.

2013 çулта РФ математика вёренёвне аталантармалли концепци йышăнчёç. Унпа килёшӳллён çак предметпа ППЭ икё пая уйрăлё: никёс тата профиль шайсем пулёç. Экзамена иккёллё тыттарассипе кашни регион хăй тёллён йышăну тăвать. Вăтам шкултан вёренсе тухакана аттестат илмешкён асăннă предметпа никёс шайра экзамен тытни те çителёклё. Урăхла калас тăк – «пурнăçра кирлё чухлё» пёлсен...

Аслă вёренӳ заведенине кёмелли экзаменсен йышёнче математика пур тăк никёс шайри пёлёве çирёплетни кăна сахал. Абитуриент профиль ППЭне тытма тивёç. Кăткăслăх енчен вăл 2014 çулта вёренсе тухакансем валли çирёплетнё тёслёхпе тан пулё.

Ют чёлхепе экзамен парасси еплерех йёркеленё? Çакнашкал тёрёслеве хутшăнакансен малашне çыру ёçёпе кăна çырлахма май килмё, хăйсем калаçма еплерех пёлнине те кăтартмалла пулё. Хальлёхе сăмах вёççён хуравламалли ёçсене пурнăçласси – выпускникăн ирёкёпе. Апла пулин те нумай балл пухас тёллевлисен ку пайран пăрăнма май килмё.

ППЭ тёрёслев-виçев материалёсене 2015 çулта заданисен уçă банкёнчен те кёртёç. Вăл банка Педагогика виçевёсен федераци институчён сайчё урлă кёме май пулё. Рособрнадзор çакна та пёлтерет: Раççейри кашни вăхăт поясё валли тёрёслев-виçев материалёсен хăйён пуххине хатёрлёç. Çапла вара выпускниксен урăх поясра пурăнакан тантăшёсен заданийёсемпе усă курма май килмё.

Çёнё йёркепе ППЭ малтанхилле виçё тапхăрпа иртмё. 2015 çулта шкулпа сыв пуллашакансем те, вăтам пёлӳ маларах илнисем те ППЭсене ака-çёртме уйăхёсенче тытёç. Вырăс чёлхипе, математикăпа – пăрăнми /обязательнăй/ экзаменсем. Суйласа илмелли предметсене пуш уйăхён 1-мёшёччен çирёплетмелле.

Хăш-пёр предметпа экзамен тытассине ăна вёренсе пётерсенех йёркелеме май пур. Акă, тёслёхрен, географипе – 10 класс пётерсен.

2014 çулхи экзамен кампанийён тёллевё – тёрёслев май пур таран «тăрă» пултăр тени – килес çул та вăйра юлё. Видеосăнавпа экзамен иртекен кашни пункта тивёçтерёç, онлайн тытăмёпе сăнав пыракан пўлёмсем йышланёç.

■ **Ирина ИВАНОВА**

ХАСТАРЛĂХ

Çуллахи чи çутă кунсем – "Орленокра" иртнисем

Хăйне темиçе çул каялла кёçех çёр-шывёпе паллă кану çак центрне çитсе курăн тенё тёк Юра ёненмёччё. Телее, пурнăç хушăран кётменлёх парнеленипе илёртӳллё те. Канаш районёнчи Хучелти пётёмёшле пёлӳ паракан тёп шкул вёренекенё Юрий Григорьев та çапла кăçалхи çуллахи каникулта çавнашкал парнене тивёçрё: пур енёпе те хастар çул çитмен çамрăк Пётём Раççей ача-пăча "Орленок" центрёнче канса курчё.

Шкулти "Асамат кёперё" ача-пăча организацийён ертӳçи 2014 çулта республикăри ачасен общество пёрлешёвёсен лидерёсен "Манăн пуçару" конкурсён лауреачё пулса тăнă. Çапах та "Орленока" каякансен йышне лекме хăйне урăх çитёнӳ витём кўнё тесе шухăшлать. Мускавра йёркеленё ачасемпе çамрăксен компьютер пултарулăхён пётём тёнчери "Планета экологийё – 2013" конкурсёнче призер ятне илнё пултаруллă чăваш ачи. Ку кăна та мар. Юрий шкул ачисен предмет олимпиадисене çуллен хастар хутшăнать, муниципалитет шайёнче ялан тенё пекех хăйён тантăшёсен хушшинче çёнтерет. Акă иртнё вёренӳ çулёнче вăл 6 хутчен призер пулнă. Çак çитёнӳсене шута илсе Ю.Григорьева Чăваш Республикин Пуçлăхён уйрăмах пултаруллисене тивёçекен стипендине парса тăмашкăн йышăннă.

Утă уйăхён 16-мёшёнче Чăваш Енрен чи пултаруллă 19 ача "Орленока" кайма çула тухнă. Юра "Ачалăх утравё – "Ералаш" ятарлă сменăра каннă. Вăл тёрлё çёртен пухăннă ачасене паллă киножурнал формачёпе сюжетсем ўкерме вёрентес тёллевлё пулнă. Чăн та, тусёсем пекех чăваш ачи те 21 кун тăршшёнче кино ўкерес ăсталăха хăнăхма, шўтпе кулă ырă енне курма тытăннă.

Раççей Федерацийён Олимп комитечё те лагерьте канакан ачасем валли кăсăклă проект хатёрленё. Хучел хастарё "Олимп патрулё" пётём Раççей вёренӳ программине хутшăннă.

– "Орленок" никама та тунсăхлама памасть. Унта канакан кашни ача мёнле те пулин ёмёт-тёллев патне ăнтăлать. 21 кун пёр кёске самант пекех хăвăрт иртсе кайрё. Раççейён тёрлё кётесёнче пурăнакан тантăшсемпе туслашма, пёр-пёрне мёне те пулин вёрентме ёлкёртёмёр çав хушăра. Пурте хăйне май пултаруллă. Пёр çемьери пек пурăнтăмăр та... салантăмăр. Анчах, шансах тăратăп, эпир тёл пулатпăрах, – хăйён шухăш-кăмăлёпе паллаштарать вёренекен.

Çёнё вёренӳ çулёнче Юрăна çёнё çитёнӳсем сунатпăр. Ёмёчёсем çитсех пыччăр. Хальхи вăхăтра пуçарулăскер Канаш район администрацийён вёренӳ управленийён методисчёсемпе пёрле ку тăрăхри пултаруллă ачасен "Кёрен парăс" соцпроект картинчи форумне хатёрленет.

■ **Анна КУПРИЯНОВА**

КЁСКЕН

Пултарулăх çуртне – çул уçă

Юлашки вăхăтра вёренӳ тытăмёнче ачана пултарулăх валли çул уçса пырас тёллевпе хушма пёлӳ памалли çинчен нумай каласатпăр.

Ача-пăча хăйне хупăрласа тăракан тёнчере ырри-янăххине уяма хăнăхнă чухне çав тери сисёмлё. Çавăнпах ёнтё пултарулăхăн тёрлё енне туптассине пёчёкрен пуçлани пёлтерёшлё.

Шăпах çак шухăша тёпе хурать те хăйён ёç-хёлёнче Етёрне районён Ача-пăча пултарулăх çурчён «Малышок» пёрлешёвё. Кунта ачасене 6 çултан пуçласа йышăнаççё. Хушма пёлӳ парас ёç икё енёпе пулса пырать: ташласси тата ўкересси. Вёрентекенсем ушкăна çўрекенсен ўсёмне шута илсе вёсене пултарулăха аталантарас кăмăл патне вăйă урлă илсе пыраççё.

Пёрлешӳ ёçченёсем шăпăрлансем сăнама, илеме курма вёренччёр, ăс-хакăлпа пуянланччăр тесе тăрăшаççё. Пултарулăха пёчёкрен аталантарни ачара ырă пахалăхсем никёслеме май парать.

■ **Инна ВЛАДИМИРОВА**

Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатёрленё.

КРИМИНАЛ

Ялта ĕçлемесĕрех...

Куславкка районĕн прокуратури тупса палăртнă ултав тĕслĕхĕ "Агропромышленноç комплексĕн аталанăвĕ" нацпроекта пурнăçлама уйăрнă укçа тĕлĕшпе саккуна пăснипе çыхăннă.

Нацпроектпа килĕшӳллĕн пĕлтĕрхи çу уйăхĕнче Тĕрлемес ял тăрăхĕн администрацийĕ, Куславкка районĕнче пурăнакан çын тата ăна ĕç паракан – ял хуçалăх продукцийĕ туса илес енĕпе ĕçлекен тулли мар яваплă общество – çамрăк çемьене çурт-йĕрпе тивĕçтересси çинчен калакан килĕшӳ тунă. Ăна тĕпе хурса ĕç паракан хайхи çынна ĕçпе тивĕçтерет, унăн вара ялта пилĕк çултан кая мар ĕçлемелле. Енсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçласан район администрацийĕ гражданина ялта çурт туянма укçа парать.

Виçĕ енлĕ килĕшĕве тĕпе хурса çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмалла тесе йышăннă çемьене федераци, республика бюджечĕсен тата вырăнти бюджет шучĕпе 979 пин тенкĕ ытла тӳленĕ. Анчах тĕрĕслев çак çын асăннă тулли мар яваплă обществăра ĕçлеменнине çирĕплетнĕ. Унта ĕçлес кăмăлĕ те пулман, мĕншĕн тесен вăл хурал организацийĕнче тăрăшнă. Тĕрĕслев материалĕсене тĕпе хурса асăннă арçын тĕлĕшпе ултавшăн уголовлă ĕç пуçарнă.

Палăртса хăварни вырăнлă: килĕшӳ условийĕсем çине таянса ял тăрăхĕн администрацийĕн çын килĕшĕве пурнăçламаннине кура социаллă тӳлеве суд урлă шыраса илме ирĕк пур. Тĕрлемес ял тăрăхĕн администрацийĕ вара гражданинăн ĕç килĕшĕвĕн чăнлăхне тĕрĕслемен, бюджета кӳнĕ сиене шыраса илес ыйтăва та çĕклемен. Çавна май район прокурорĕ администраци пуçлăхĕн ячĕпе представлени çырнă.

Врач взятка илнĕ

Следстви комитечĕн Çĕнĕ Шупашкарти пайĕ химиксен хулинчи ӳтпе венерологи диспансерĕн врач-дерматовенерологĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ. Медике УК 290 статйин 3-мĕш пайĕпе айăплаççĕ – взятка илнĕшĕн.

Преступлени кăçалхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнче пулнă. Врач хăйĕн служба пӳлĕмĕнче пĕр хĕрарăмран 1 пин тенкĕ взятка илнĕ. Паллах, укçана ахалех паман, хĕрарăма ӳтпе венери чирĕсем çуккине ĕнентерекен справка кирлĕ пулнă, медицина тĕрĕслевĕпе, тивĕçлĕ анализсене парса аппаланас, вăхăт ирттерес темен. Тӳленĕ – пулчĕ те. Çак справка ăна хăйĕн мăшăрĕпе, юсанмалли учрежденире лараканскерпе, вăрахлăх тĕл пулăва кайма кирлĕ пулнă.

Следстви шухăшĕпе – врач айăпне ĕнентерме материал çителĕклĕ. Çавна май уголовлă ĕçе Çĕнĕ Шупашкар хулин судне тишкерме ярса панă ĕнтĕ. Преступление СК следователĕсем ШЕМĕн химиксен хулинчи экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешекен пайĕн сотрудникĕсемпе алла-аллăн ĕçлесе тăрă шыв çине кăларнине пайăррăн палăртаççĕ.

Суя справкăпа

Патăрьел районĕн прокуратури граждансене коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеме субсиди шучĕпе уйăракан бюджет укçипе мĕнле усă курнине тĕрĕсленĕ те – ултав тĕслĕхне тăрă шыв çине кăларнă.

Патшалăх учрежденийĕн – районăн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн – должноçри çыннисенчен пĕри бюджет укçине куç хывнă. Çав укçана çемье членĕсен çын пуçне тивекен вăтам тупăшĕ республикăри пурăнма кирлĕ виçерен иртмен граждансене коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеме субсиди шучĕпе параççĕ. Должноçри çын хăйĕн служба вырăнĕпе усă курса суя справкăсем хатĕрленĕ, унта тупăша çирĕплетекен кăтартусене пĕчĕклетсе çырнă. Хайхи хутсене районăн социаллă хӳтлĕх пайне субсиди илме панă.

Çапла майпа суя справкăпа усă курса 2008 çултан тытăнса 2013 çулхи утă уйăхĕччен самай пысăк пайта курнă – гражданинăн тӳлев шучĕ çине бюджетран пĕтĕмпе 90 пин тенкĕ ытла куçарнă. Район прокуратури панă тĕрĕслев материалĕсем тăрăх следстви органĕ Уголовлă кодексăн икĕ статйипе /тӳлевсем илнĕ чух улталанăшăн тата службăри ултавшăн/ уголовлă ĕç пуçарнă.

«Хаклă» доцент

Шупашкарти Калинин районĕн сучĕ Мускав автомобильпе çул-йĕр патшалăх техника университечĕн кафедрисенчен пĕрин доценчĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор палăртнă. Вăл вăя кĕмен-ха, çапах вердикт пирки пĕлтерме юрать: преподавателе 230 пин тенкĕлĕх штрафланă, çийĕнчен çулталăк çурăлăха вĕрентекенре ĕçлеме чарнă.

Взяткăпа çакланнă. Вăл çак преступленин 42 саманчĕшĕн айăплине çирĕплетнĕ. ЧР ШЕМĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – экономика хăрушсăрлăхĕ тата коррупципе кĕрешес енĕпе ĕçлекен пай сотрудникĕсем çак преподавателе кăçалхи ака уйăхĕнче сăнама пуçланă. Иртĕхсех кайнă çав – лекци вăхăтĕнчех студентсене хатĕр тĕрĕслев ĕçĕсем сĕнме тытăннă. «Электротехникăн теори никĕсĕсем» тата «Пĕтĕмĕшле электроникăпа элетротехника» дисциплинăсемпе зачет илме, экзамен тытма кирлĕ ĕçсене посредниксенчен ыйтмалли пирки каланă, занятирех вĕренекенсене вĕсен телефонĕсене пĕлтернĕ.

Студентсемшĕн хайхи тĕрĕслев ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн пурнăçласси çăмăлах пулман, çавăнпа хăшĕсем вĕсене доцентран туяннă – 2,5-3,9 пин тенкĕлле. Çийĕнчен посредниксем те хăйсен «пулăшу ĕçĕсемшĕн» хушма хак палăртнă. Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕ çакна тĕпчесе пĕлнĕ: пĕлтĕрхи ака уйăхĕнчен пуçласа çулталăк хушшинче преподаватель 42 студентран пĕтĕмпе 147 пин тенкĕ ытла взятка илнĕ.

Оперативлă мероприятисем ирттернĕ май полицейскисем 300 ытла студентпа курнăçса каласнă. Аслă шкулăн хайхи доцента пулăшнă 4 ĕçченне те тупса палăртнă – укçана вĕсем урлă панă. 3 студентран черетлĕ хут взятка илнĕ чухне преподавателе тытса чарнă. Унăн хваттерĕнче ухтару йĕркеленĕ: хатĕр тĕрĕслев ĕçĕсем – миххипех. Пакунлисем вĕсене уçкаласа пăхнă май пĕтĕмлетӳ тунă: хăшĕсем вараланма-кивелме те ĕлкĕрнĕ, вĕсене студентсене темиçешер хут сутнă-тăр – зачет ĕçĕсен хуплашкисене кăна улăштарнă.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Курман, илтмен

Тăвай районĕнче пурăнакан 37 çулти Николай Данилов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе айăплав актне çирĕплетрĕмĕр. Çын пурлăхне вăрланăшăн вăл кĕçех суд умне тăрĕ.

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн Данилов кăçалхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче кăнтăр кунĕнчех хăйĕнпе пĕр ялта пурăнаканăн хуçалăхĕнчен бензопăчкă вăрланă.

Çав кун арçын вĕсене хуралтă тумашкăн пулăшма чĕннĕ. Нимене пухăннисене кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче эрехпе сăйланă. Çакăн хыççăн вара пулăшуçăсем паян текех ĕçлес мар тенĕ. Ют пурлăха вăрланăшăн маларах та судпа 2 хут айăпланма ĕлкĕрнĕ Данилов çакăнпа усă курнă та: пӳртрен тухнă, бензопăчка илнĕ те килнелле утнă. Ăна кĕлетри пичкене хунă, çиелтен михĕсем пăрахнă.

Чее çав, хăйĕн пирки иккĕленӳ çураласран сыхланса вăл каллех хуралтă çĕклекен хуçалăха таврăннă, пĕрле пĕлĕшне те чĕннĕ. Каллех – ĕçкĕ. Анчах кил хуçи хĕрарăмĕ бензопăчкă çуккине асăрханă та ăна шырама пикеннĕ. Данилов шалт та малт: курман, илтмен... «Тупăнать пуль-ха», – тесе кил хуçисене лăплантарма та именмен. Анчах лешсем шăпах ăна шанман. Николай маларах çак хуçалăхран урпа вăрланăшăн судпа айăпланнă вĕт. Кил хуçи хĕрарăмĕ Данилов патне темиçе те кайнă, Николай вара унта пулман. Полицирен пулăшу ыйтма тивнĕ.

Бензопăчкă пĕр уйăх иртсен тупаннă – тислĕк купи патĕнче. Следстви ăна никам та мар, Данилов вăрланине çирĕплетнĕ. Пĕлĕшĕсемпе пĕрле эрех ĕçнĕ май Николай пăчкă вăрланине хăй асăрханмасăр персе янă. Пакунлисемпе курнăçсан, чăн та, малтанах туннă-ха. Çапах килне пырса ухтарасран хăраса ӳкнĕскер каçхине пăчка унăн хуçин пахчине йăтса пынă, тислĕк купи патне лартса хăварнă.

Апла пулин те çакă ăна яваплăхран хăтармасть. Вăрмар районĕн сучĕ хăйĕн приговорне вăрах кĕттермĕ.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА,**
Тăвай районĕн прокурорĕ

«Архив хучĕсен вăрттăнлăхĕсене шыраса...»

Тусĕсемпе ĕçтешĕсен асĕнче вăл çутă йĕр çеç хăварнă

Çакăн пек ятпа ЧР Хальхи истори архивĕн ĕçченĕсем республикăри паллă журналист, публицист, Çемен Элкер премийĕн лауреачĕ Иван Матросов çуралнăранпа 80 çул çитнине халалласа виртуаллă курав хатĕрленĕ. Унпа паллаштарма йĕркеленĕ уява Иван Моисеевичăн çывăх çыннисене, ĕçтешĕсемпе пĕлĕшĕсене йыхравланă.

И.Матросовăн пурнăçĕпе тата ĕçĕхĕлĕ çинчен каласа кăтартакан электрон курава журналистăн патшалăх архивне упрама панă документсенчен хатĕрленĕ. «2003 çулта Иван Моисеевич хаклă хутсене йышăнма ыйтса çырчĕ, – иртнине аса илчĕ архив директорĕ Людмила Устимова. – «Вăрçăра пуç хунă салтаксен тăванĕсенчен питĕ нумай документ илнĕ эпĕ. Çавсемшĕн хама яваплă туятăп», – тенĕччĕ». Çакăн хыççăн йĕркеленнĕ те Иван Матросовăн Хальхи истори архивĕнчи фончĕ.

Виртуаллă куравра – 92 документ. Пĕрремĕш пай журналистăн кун-çулĕпе паллаштарать. Иккĕмĕшĕнче – Брест крепоçне хӳтĕленĕ чăвашсемпе çыхăннă материал. И.Матросовпа В.Бурмистров тăрăшнипе 40 чăваш салтакĕн хушаматне тупса палăртма май килнĕ. Журналист Ульяновсен çемйипе, вĕсене çывăх пĕлнĕ тата Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, ĕçленĕ çынсемпе те кăсăкланнă. Ку ярăмри тĕпчевсем çинчен виççĕмĕш пай каласа кăтартать.

УНПА ПĔРЛЕ ĔÇЛЕНĔ ÇЫНСЕМ, ТУСĔСЕМ КАЛАÇНĂ ХЫÇÇĂН ÇАПЛА ПĔТĔМЛЕТРĔМ: ИВАН МАТРОСОВ ПИТĔ ПУЛТАРУЛЛĂ, УНĂН КУН-ÇУЛĔ ЧĂННИПЕХ ТЕ ПУЯН, ПИТĔ КĂСĂК

И.Матросов «Коммунизм ялавĕ» /халĕ «Хыпар»/ хаçатра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухсан та юратнă ĕçне пăрахман: çырнă, тĕпченĕ, кĕнекесем кăларнă... Журналист 6 томлă «Астăвăм» кĕнекен яваплă секретарĕ, пухса хатĕрлекенĕ, редакторĕ пулнă. Республикăн Астăвăм кĕнеки Раççейре чи лайăххисенчен пĕри шутланать. И.Матросов çавăн пекех 2005 çулта кун çути курнă Патăрьел район энциклопедийĕн авторĕсенчен пĕри.

Иван Матросов питĕ пултарулла, унăн кун-çулĕ чăннипех те пуян, питĕ кăсăк. Унпа пĕрле ĕçленĕ çынсем, тусĕсем каласнă хыççăн çапла пĕтĕмлетрĕм. Акă Сергей Карягин журналист Иван Моисеевичпа иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче паллашнă. Ун чухне вĕсем иккĕшĕ те кӳршĕллĕ ялсенчи шкулсенче ĕçленĕ.

«Вăл пĕтĕм пурнăçне журналистикăна халалларĕ, – аса илчĕ Сергей Афанасьевич. – Республикăра паллă публицист пулса тăчĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçата ун хыççăн ĕçлеме килтĕм. Тивĕçлĕ канăва тухсан «Астăвăм» кĕнеке кăларма хутшăнчĕ. Вăрçăран таврăннисене халалланă пилĕк томпа мана ĕçлеме тӳр килчĕ. Çапла вара унăн ĕçне манăн малалла тăсма тиврĕ.

Патăрьел район энциклопедине кăларас текен такам та пурччĕ. Анчах ĕçе пуçăнаканĕ пулмарĕ. «Пирĕнсĕр пуçне никам та çак ĕçе тăвас çук», – терĕ Иван Моисеевич. Чăнах та, ку енĕпе унăн опычĕ те çителĕклĕ, материал та чылай пулнă. Вăл, эпĕ тата А.Мефодьев ĕçе пикентĕмĕр. Иван Моисеевич вилнĕ хыççăн иккĕмĕш тома хатĕрлесе çитертĕм».

С.Карягин каланă тăрăх – И.Матросов питĕ ĕçе юратакан çын пулнă. Темпе те интересленнĕ вăл. Курниилтнине пĕтĕмпех кун кĕнекине çырса пынă. Пенсие тухсан вара архив уннăн тĕп ĕç пулнă. Республикăри архивсенче кăна ларман вăл. Хусанти, ытти хулари «аваллăх управçисене» çитнĕ.

Иван Матросовпа нумай çул пĕрле ĕçленĕ Демьян Семенов ĕçтешĕ питĕ сăпайлă çын пулнине палăртрĕ. «Редакци штатне куçма икĕ çул ӳкĕтлерĕмĕр. Аранах килĕшрĕ. Çĕнĕ должноç сĕнсен те тӳрех йышăнмарĕ, – аса илчĕ Демьян Филиппович. – Кăнтăр районĕсенче корреспондетра ĕçленĕ чухне те хăйне лайăх енчен çеç кăтартнă. Пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлнĕ вăл. Статйисем çивĕч пулса тухатчĕç, нумай çыратчĕ. Питĕ ĕçчен çын. Шырама, тĕпчеме юрататчĕ».

Пĕлес туртăм Иван Матросова шăпах пысăк ĕçсем тума хистенĕ те ĕнтĕ.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

АСРАХ

«Салампи» авторне хисеплесе

К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев çуралнăранпа 90 çул çитнине халалланă ас тăвăм каçĕ иртрĕ.

1998 çулхи çурла уйăхĕнче пурнăçран уйрăлнă çыравçăна сума суса йĕркеленĕ каça ĕçтешĕсем, калем ăстисем чылайăн килнĕ. Денис Гордеев, Порфирий Афанасьев, Иван Вутлан, Василий Сипет, Любовь Федорова, Арсений Тарасов, Василий Кошкин-Кервен çыравçăсем Александр Артемьевпа пĕрле ĕçленĕ вăхăтсене, пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне аса илчĕç.

Литература каçне музей ĕçченĕ Галина Еливанова уçрĕ. Вăл хăнасене «Ах, пĕлесчĕ» куравпа паллаштарчĕ. Унта писателĕн кĕнекисем, ал çырăвĕсем, сăн ӳкерчĕкĕсем вырăн тупнă. Вĕсене пăхнăçемĕн çыравçăн кунçулĕ яри уçалать. А.Артемьев 1947 çулта «Пĕчĕк Лийăн пысăк савăнăçĕ» калавĕ пичетленнĕ хыççăн писатель пек палăрнă. 1954 çулта «Салампи» повеçĕ кун çути курнă. Каярахпа хайлавĕсем пĕрин хыççăн тепри пичетленнĕ. А.Артемьева ĕçри çитĕнӳсемшĕн «Хисеп Палли», Халăхсен туслăхĕ орденсемпе наградăланă.

Ас тăвăм каçĕнче çавăн пекех чăваш халăх артистки Валентина Музыкантова «Салампи» повеç тăрăх лартнă спектакль сыпăкне кăтартрĕ. Николай Рикмасов тата Марина Ильичева ертсе пыракан ансамбль унăн сăввисемпе çырнă юрăсене юрларĕ. Чăваш халăх артисчĕ Иван Христофоров чăваш халăх юррисене шăрантарчĕ.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

Пирвайхи турнирсенчен – çитĕнӳпе

Челябинск облаçĕнчи Пласт хулинче ял спортсменĕсен Пĕтĕм Раççейри ăмăртăвĕсен пирвайхи тупăшăвĕсем иртнĕ.

Унта самбистсемпе кире пуканĕ йăтакансем вăй виçнĕ. Турнирта Чăваш Ен чысне 12 спортсмен хӳтĕленĕ, вĕсенчен 5-шĕ лайăх кăтартусемпе палăрнă. Чи пысăк наградăна Николай Лапшин самбист тивĕçнĕ, 62 килограмлă виçере пирĕн ентеш кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ. Унăн юлташĕсем Денис Щербаков, Иван Клементьев тата Екатерина Осипова уйрăм ушкăнсенче пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн самбистсем тăваттăмĕш вырăнта.

Тимĕр вăйăипе туслисен турнирĕнче вара Куславкка хĕрне Анастасия Александровăна кăна ăннă. Хăйĕн виçинче вăл пухмача «бронзăпа» пуянлатнă.

Палăртмалла: ял спортсменĕсен Пĕтĕм Раççейри ăмăртăвĕсене спортăн 17 енĕпе йĕркелеççĕ. Çулсерен иртекен тупăшусене вунă регион йышăнĕ. Çак чыса кăçал Чăваш Ен те тивĕçнĕ: пирĕн республикăна çĕр-шыври чи маттур кĕрешӳçĕсем, чупакан атлетсем тата хăвăрт утакансем килĕç. Турнирсем Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче авăн уйăхĕн 24-26-мĕшĕсенче иртĕç.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

ПРОДАЮ

172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень. Д-ка. Т. 8-902-327-75-85.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин сăхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.П.МИХАЙЛОВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем: 56-00-67 – директор – тĕп редактор; 56-33-64 – тĕп редактор çумĕ; 56-04-17 – тĕп редактор çумĕ; 62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем: 28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ; 56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ; 56-08-62 – экономика пайĕ; 56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ; 56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ; 56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ; 28-85-87 – корректорсем; 56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ: 28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ; 56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем: 8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай, /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç; 28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
Çаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Çаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компететлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 17.09.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7393. Заказ 3526.